26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
11
ЮНКУН
160(6397) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Государство умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе чыслăн пурнăçлар

Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсемпе тата Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ хамăрăн паттăр войскăсене тав туса панă приказпа хавхаланса, республикăри колхозниксемпе колхозницăсем кăçалхи вăйлă тырпула вăхăтра пухса кĕртессишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене срокра татассишĕн хĕрсех ĕçлеççĕ.

Малта пыракан вуншар колхозсем государствăна кĕрхи тырăсем памалли обязательствăсене тултарса, тăван çĕршыв умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе пурнăçа кĕртнĕ те ĕнтĕ. Çакă вăл ирсĕр тăшмана аркатса, Хĕвеланăçнелле наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара ĕçлĕн пулăшни, ăна çĕнĕ вăйхал пани пулать.

Паян эпир Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем пĕтĕм республикăри колхозниксене тырпулсене кĕске срокра, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене пур тĕлĕшпе те вăхăтра пурнăçлассишĕн, çакăн çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапортлама право илессишĕн социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнсе каланине пичетлетпĕр. Вăрнар районĕнчи колхозсем пур тĕрлĕ обязательствăсене те кăçалхи октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма сăмах параççĕ. Вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртме тытăнчĕç те ĕнтĕ. Иртнĕ пилĕккунлăхра, августăн 1-мĕшĕнчен 5-мĕшĕ хушшинче, Вăрнар районĕнчи колхозсем государствăна тырă пама планăн [illegible] процентне панă. Çак ĕçĕн хăвăртлăхне вĕсем ӳстерсех пыраççĕ.

Государствăна тĕштырă парас енĕпе илсе пăхсан, çак районсем [illegible] малта пыраççĕ: Етĕрне районĕ государствăна тĕштырă памалли плана августăн 5-мĕшĕ тĕлне 41,9 процент, Советское—19,3 процент, Сĕнтĕр—15 процент, Элĕк—13 процент, Калинино—10,6 процент пурнăçа кĕртнĕ. Анчах Етĕрне районĕ иртнĕ пилĕккунлăхра государствăна тырă памалли плана пĕр центнер те тырă паман. Çавăнпа та ку район, малашне те пĕр тикĕс ĕçлесе пымасан, кая тăрса юлма пултарать.

Пĕтĕмĕшле илсен, республика государствăна тĕштырă памалли плана августăн 5-мĕшĕ тĕлне 5,1 процент кăна пурнăçланă. Районсенчи килекен хыпарсем государствăна тырă парас ĕç юлашки кунсенче те çителĕксĕр пулса пыни çинчен калаççĕ. Ку тĕлĕшпе Октябрьски, Тăвай, Çĕмĕрле, Куславкка, Чкаловски, Елчĕк районĕсем уйрăмах кая юлса пыраççĕ. Çĕмĕрле районĕ, сăмахран, плана августăн 5-мĕшĕ тĕлне те 0,5 процент кăна пурнăçланă.

Натуроплата тӳлес, Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывас ĕçсем татах та кая юлса пыраççĕ. Натуроплата тыррине памалли плана республика колхозсем пĕтĕмпе те 1,5 процент кăна пурнăçланă. Йĕпреç, Куславкка, Кувакино, Первомайски, Вăрмар, Шăмăршă, Шăхасан районĕсенчи колхозсем натуроплата тыррине пачах та тӳлемен.

Хĕрлĕ Çар фондне республикипе мĕнпурĕ те 1,4 процент чухлĕ кăна хывнă. Ку енĕпе Элĕк (17 процент), Красноармейски (15 процент) районсем кăна ыттисенчен аванрах ĕçлеççĕ.

Государствăна тырă пама республикăри колхозсем июлĕн юлашки пилĕккунлăхĕнче тытăннă, халĕ ĕнтĕ виççĕмĕш пилĕккунлăх иртсе кайрĕ. Анчах тырă парас хăвăртлăх пачах та çителĕксĕр ӳссе пырать. Иккĕмĕш пилĕккунлăхра республикăри 11 район, вĕсен шутĕнче Улатăр, Элĕк, Йĕпреç, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри, Первомайски, Çĕрпӳ, Çĕмĕрле, Шăмăршă тата ытти районсем государствăна пĕр центнер те тырă леçсе паман.

Çакă вăл, чи малтан, нумай колхозсенче авăн çапас ĕçе кирлĕ пек организацилеменнинчен килет. Малта пыракан колхозсем кашни бригада валлиех витнĕ итемсем, кĕлте типĕтмелли авăнсем тунă та нимĕнле çанталăка пăхмасăрах авăн çапаççĕ. Ятарласа организациленĕ бригадăсем хатĕрлев пункчĕсене тырă турттараççĕ. Ĕç пĕр самантлăха та чарăнса тăмасть.

Партипе правительство ятарласа кăтартса панă пулин те, хăшпĕр районсенчи колхозсем антнĕ иттемсене, тырă типĕтмелли авăнсене вăхăтра туса хатĕрлемен, хатĕрлев пункчĕсене тырă турттарас бригадăсене организацилемен; [illegible]

Çак задачăна пурнăçласишĕн парти райкомĕсем райсовет исполкомĕсем [illegible]

Государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех срокчен тултарса, Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн кĕрешер! Паттăр Хĕрлĕ Çар ячĕпе, Орловски тата Белгородски чаплă дивизисен ячĕпе государствăна тырă леçсе пама Хĕрлĕ обозсем организацилер!

Государствăна тырă хĕрлĕ обозсемпе леçсе параççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 10-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Кушар ялсоветĕнчи колхозниксем, пирĕн [illegible] оккупантсене хирĕç ăнăçлă наступлени туса пыни çине, Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларни çине ответлесе, Хĕрлĕ обоз организацилерĕç. Государствăна 59,18 центнер çĕнĕ тырă леçсе пачĕç.

С. ШАДИН.

Елчĕк районĕн иккĕмĕш хĕрлĕ обозĕ

Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ войскăсене панă приказне ответлесе, Елчĕк районĕнчи колхозниксем августăн 7-мĕшĕнче государствăна тырă пама 391 лавран хĕрлĕ обоз организацилерĕç. Государствăна 1.188 центнер ытла тырă пачĕç. Ленин ячĕпе тăракан колхоз хĕрлĕ обоза 40 лав тырă пуçтарнă.

С. М.

Çăмарта памалли обязательствăна ирттерсе тултарчĕç

ЭЛЕК. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри чылай колхозсем кăçал государствăна çăмарта памалли обязательствăна срокчен тата ирттерсе тултарчĕç. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Кĕçĕн Хирлепри «Пионер» колхоз малта пырать, вăл çăмарта памалли обязательствăна кăçал 160 процент ытла тултарчĕ. Тури Вылăри Сталин ячĕпе тăракан колхозăн обязательство тăрăх государствăна 5 399 çăмарта памалла. [illegible] Халĕ вĕсем государствăна планран ирттерсе çăмарта параççĕ.

Лайăх вĕренчĕç

Куславккари ФЗО шкулĕнче вĕренекен ачасем всевобучăн 110 сехетлĕ программине лайăх вĕренсе пĕтерчĕç. Всевобучра вĕреннĕ 28 çын «отлично» паллăсем, 92 вĕренекен «хорошо» паллăсем, 66 вĕренекен «посредственно» паллăсем илчĕç. Всевобучăн 110 сехетлĕ программине вĕренсе пынă вăхăтрах [illegible] Вĕренекенсем профсоюза комсомол [illegible] кросĕсене анăн хутшăннă, районри спартакиада ирттерме [illegible] Çавăн пекех вĕсем ФЗО шкулĕсем [illegible] Шупашкара [illegible] кăтартрĕç. Çарпа физкультура ĕçне А. Чухров, Е. Чухров, В. Конусов, А. Юркин т. ыт. те лайăх вĕренсе тухрĕç. [illegible]

Н. ФОМИН.

Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртни тата государствăна тырпул памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлани çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн социализмлă ăмăрту сарса яма Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене чĕнсе калани çинчен

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнать:

1. Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен, тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртессишĕн, государствăна тырпулпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлассишĕн тата тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртни, государствăна тĕштырăпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем памалли çулталăкри плана срокчен пурнăçлани çинчен Сталин юлташа чи малтан рапорт пама право илессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене чĕнсе каланăскерсен, пуçарăвне ырлас.

2. ВКП(б) райкомĕсене Вăрнар районĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче, трактористсемпе комбайнерсен пухăвĕсенче сӳтсе-явма тата тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртни, государствăна тĕштырăпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлани çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма хушас.

3. Паттăр Хĕрлĕ Çар ячĕпе, унăн Орловскипе Белгородски чаплă дивизийĕсен ячĕпе государствăна тырă леçсе пама Хĕрлĕ обозсем организацилемелле.

ВКП(б) Обкомĕн Секретарĕ
И. ЧАРЫКОВ.

Тырпулсене чи кĕске срокра тата тăккаламасăр пухса кĕртер, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлар!

Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Верховный Главнокомандующи Совет Союз Маршалĕ Сталин юлташ Брянск, Воронеж тата Çеçенхир фрончĕсенчи войскăсене вĕсем нимĕçсен çуллахи наступленине пĕтерсе лартнă ятпа панă приказпа хавхаланса, Хĕрлĕ Çар воинĕсене Хĕвеланăçнелле ăнăçлă наступлени тума пĕр вĕçĕмсĕр пулăшса тăрас шухăш-кăмăлпа çунса эпир, Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, кăçалхи тырпула пĕр пĕрчĕ юлмиччен, чи кĕске срокра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртĕпĕр тесе Сталин юлташа тупа тăватпăр. Хамăрăн сăмаха пурнăça кĕртес тесе, эпир хире хĕвелпе пĕрлех тухса сĕм тĕттĕм пуличчен ĕçлетпĕр, кашни колхозникпе колхозница кашни кунах норма çурă е икĕ норма тултариччен хиртен кĕместпĕр.

Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăça кĕртесси колхозсен чи пирвайхи задачи пулса тăрать. Вăл колхозниксемпе колхозницăсен тăван çĕршыва мухтавлăн хӳтĕлекенсем умĕнчи чыслă тивĕçлĕхĕ пулса тăрать. Государствăна срокчен тырă парса татассишĕн социализмлă ăмăртăва хутшăнса, эпир кăçалхи октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă пĕтĕмпех парса татма, МТС ĕçĕсемшĕн натуроплата тыррине тӳлесе татма, Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывас ĕçе вĕçлеме пулатпăр. Çак вăхăт тĕлнех государствăна çĕрулми, пахча-çимĕç, ашкакай тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем парас ĕççене те вĕçлетпĕр.

Хаклă юлташсем—Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем! Пирĕн республика Ленин орденне илнĕ. Иртнĕ çул выльăхчĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çитĕнӳсем тунăшăн эпир Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илтĕмĕр. ССР Союзĕн Наркомземĕ, вăйлă тырпулшăн пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсене пăхса тухса, пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратрĕ. СССР Наркомземĕ, выльăхчĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсене пăхса тухса, пирĕн республикăна ку тĕлĕшпе те Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратрĕ. Орденлă республикăн чысне çӳлте тытасси, кăçал та Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пуласси—пирĕн тивĕçлĕх пулса тăрать.

Колхозниксемпе колхозница юлташсем, эпир сире социализмлă ăмăртăва хутшăнма, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе ăнăçлăн вĕçлени çинчен тата государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăça кĕртни çинчен Сталин юлташ патне чи малтан рапорт ярассишĕн кĕрешӳ сарса яма чĕнетпĕр.

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ СТАЛИН юлташ!

Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем хушнипе алă пуснă:

С. КОРОТКОВ—ВКП(б) райкомĕн секретарĕ, И. НИТКИН — райсовет исполкомĕн председателĕ, М. МАКСИМОВ—райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ, П. ОСИПОВ—МТС директорĕ, ОСИПОВА—«Трактор» колхоз председателĕ, А. ВАСЯНИН—Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, ИВАНОВ—Çĕн Алтăшри «Волга» колхоз председателĕ, ИВАНОВА—Сăрпуçри колхоз председателĕ, ТИХОНОВ—Булатовăри Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, ПРОКОПЬЕВ — Мамалайри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, ЕРЕМИН—Кольцовка ялсовет исполкомĕн председателĕ, АНДРЕЕВ—Хирпуçĕнчи «Победа» колхоз председателĕ, КИСЕЛЕВ—Зеленовкăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, ЧЕРНЫШЕВ—Сендимиркинăри «Гигант» колхоз председателĕ.

Чăваш боецĕсем парти ретне кĕреççĕ

Пирĕн пĕр чаçра çурри ытла чăваш боецĕсемпе командирĕсем. Вĕсем пурте Сталин юлташăн кăçалхи майăн 1-мĕшĕнчи приказне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыраççĕ. Пирĕн хушăра политикăллă-массăллă ĕç аван пулса пырать. Çавăнпа халĕ Чăваш боецĕсемпе командирĕсенчен партие кĕрекенсен йышĕ ӳсрĕ.

Николай Федоров (Советски районран) фронта килнĕренпе хăйĕн паттăрлăхне кăтартрĕ. Çапăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна правительство „За боевые заслуги" медальпе наградăларĕ. Халĕ вăл парти ретне кĕчĕ. Çавăн пекех фронтра пĕр шиксĕр çапăçакан Николай Ильин (Шăхасан районĕнчи Шăхаль ялĕнчен), Тенюшев боецсем те парти ретне кĕчĕç.

Парти речĕ лайăх çынсемпе ӳссе пырать. Хĕрлĕ Çар ретĕнче хăйсен пĕлӳлĕхĕсене ӳстерсе пырса, наступленисенче паттăрлăх кăтартнă Порфирий Романов (Канаш районĕнчи Катек ялĕнчен), Сергей Ефимов, Николай Моисеев, Николай Табаков (Тăвай районĕнчен) юлташсем парти ретне кĕме хатĕрленеççĕ. Халĕ вĕсем пурте отделени командирĕсем пулса тăраççĕ.

—Эпир, чăваш боецĕсемпе командирĕсем, большевикла парти ретне кĕрсе, хамăрăн тăван çĕршывшăн мĕнпур вăя, кирлĕ пулсан пурнăça та, хĕрхенмесĕр çапăçатпăр,—теççĕ чăваш боецĕсем.

Парторг Е. АРТЕМЬЕВ.

„Совет Союзĕн отечественнăй Аслă вăрçи çинчен" Сталин юлташ çырнă кĕнекене тимлĕн вĕренмелле

Сталин юлташăн вăрçă вăхăтĕнче тухса каланă сăмахĕсемпе приказĕсем кашни ĕççыннишĕн кĕрешӳ программи пулса тăраççĕ. Вĕсем тăван çĕршыври тата тĕнчери хальхи лару-тăрăва тĕрĕс ăнланма пулăшаççĕ, ылханлă тăшмана çĕмĕрсе тăкмалли тĕрĕс çула кăтартса параççĕ, ĕççыннисене фронтра тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçлĕхне тĕплĕн ăнланса илме вĕрентеççĕ.

Сталин юлташăн выступленийĕсем яланах пирĕн пропагандăллă тата агитациллĕ ĕçĕн тĕп никĕсĕ пулса тăнă, халĕ те çавăн пекех. Вăрçă кунĕсенче ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсем, пуçламĕш парторганизацисем, агитаторсемпе пропагандистсем Сталин юлташăн историллĕ документчĕсене ĕççыннисем патне çитерес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттерчĕç. Вĕсем Сталин юлташăн сăмахĕсемпе приказĕсене тĕплĕн вуласа ăнлантарчĕç, лекцисемпе докладсем, калаçусем туса ирттерчĕç.

Кăçалхи пиллĕк уйăх хушшинче кăна республикăра 4000 ытла лекципе доклад ирттернĕ. Вăл шутран Сталин юлташăн кĕнекине ăнлантарса парас ыйту тăрăх—1500 лекципе доклад туса ирттернĕ. Анчах ку таринччен ирттернĕ лекцисемпе докладсем çителĕксĕр-ха, вĕсене итлеме ĕççыннисем чылайĕшĕ хутшăнайман.

Чăнах, юлашки вăхăтра лекцисемпе докладсем ытларах ирттерме пуçлани сисĕнет. Шупашкар хулинче Сталин юлташăн кăçалхи февралĕн 23-мĕшĕнчи приказне ăнлантарса парас ыйтупа лекцисемпе докладсем 169 хутчен, Сталин юлташăн кăçалхи майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ тăрăх—315 хутчен ирттернĕ, вĕсенче 22.147 çын пулнă.

Нумай пулмасть «Совет Союзĕн отечественнăй Аслă вăрçи çинчен» Сталин юлташ çырнă кĕнекен виççĕмĕш изданийĕ пысăк тиражпа пичетленсе тухрĕ. Ку кĕнеке тухни коммунистсемпе комсомолецсемшĕн, пĕтĕм совет халăхĕшĕн пысăк та паллă событи пулса тăрать.

Сталин юлташăн вăрçă вăхăтĕнчи выступленийĕсене пысăккăн хакласа, Калинин юлташ çапла çырнă: «Саралса кайнă событисене таранрах ăнланса илмешкĕн совет çыннисен пурин те Сталин юлташ отечественнăй вăрçă çинчен каланисене нумай хутчен вуласа, лайăх ăнланса илес пулать. Кам та кам нимĕç захватчикĕсене хирĕç усалларах пулса кĕрешес тет,—çавăн Сталин юлташăн выступленийĕсене тимлĕн вĕренес пулать. Вĕсенче пусмăрçăсемпе кĕрешмелли майсене çав тери уççăн кăтартса панă. Вĕсене тимлĕн вĕренсен кăна истори çак ăру çине мĕн тери пысăк ответлăх хунине ăнланса илме тата хаклама пулать, эпир çавăн чухне кăна гитлеризма аркатса тăкмалли историллĕ задача пирĕн халăх умне кăларса тăратнă требованисен çӳллĕшĕнче пулăпăр».

Пирĕн мĕнпур ĕçе—тылра та, фронтра та—Сталин юлташ çак кĕнекере çырнă программăсене пурнăçлас лозунгпа туса пымалла. Пирĕн мĕнпур массăллă-политикăллă ĕçе çак питех те чаплă кĕнеке вĕрентнĕ пек туса пырас пулать, çак кĕнекен содержанине ĕççыннисен анлă массисем тĕплĕн пĕлсе тăччăр.

Сталин юлташăн çак историллĕ кĕнекине вĕренмешкĕн ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсем тата вĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсем кружоксем организацилерĕç. Чылай çĕрте парти райкомĕсемпе горкомĕсем Сталин юлташăн кĕнекине кружоксенче вĕренесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ. Комсомольски районра, сăмахран, 26 кружок, Сĕнтĕрвăрри районĕнче 21 кружок, Сĕнтĕр районĕнче 15 кружок, Шупашкар хулинче 31 кружок, Канаш хулинче 19 кружок ĕçлеççĕ. Анчах чылай районсенче (Красноармейски, Çĕмĕрле т. ыт. те) Сталин юлташăн кĕнекине вĕренмелли кружоксем пачах ĕçлемеççĕ.

Сталин юлташăн кĕнекине вĕренекенсене семинарсемпе консультацисем ирттерсе пулăшмалла. Ку тĕлĕшпе ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинечĕ лайăх енĕпе палăрса тăрать. Вăл агитколлективсен руководителĕсем валли Сталин юлташăн 1943 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнчи приказне вĕренес ыйтупа 5 заняти, Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ тăрăх 11 заняти ирттерчĕ. Занятисене ирттерес умĕн вĕсенче мĕнле темăсем сӳтсе-явассине тĕплĕн шутласа план тунă. Шупашкар хулинчи парткабинет, кунсăр пуçне, консультацисем те тăтăшах ирттерсе тăчĕ.

Анчах хăшпĕр районсенчи парткабинетсем семинарсемпе консультацисем ирттерес ĕçе пачах пăрахăçа кăларчĕç. ВКП(б) Йĕпреç райкомĕн парткабинечĕ, сăмахран, темиçе уйăх хушши ĕнтĕ нимĕнле ĕç те туса ирттермен. Парткабинетсем сӳрĕк ĕçленине малашне ниепле те тӳссе тăма çук.

Сталин юлташăн вăрçă вăхăтĕнчи выступленийĕсемпе приказĕсем уйрăм кĕнекере пичетленсе тухнă май, халĕ ĕнтĕ Сталин юлташăн уйрăм выступленийĕсемпе приказĕсене вĕреннипех лăпланса ларма юрамасть. Тăван çĕршыври тата тĕнчери хальхи лару-тăрăва таранăн та тĕрĕс ăнланас тесен, Сталин юлташăн историллĕ кĕнекине пĕтĕмпех тимлĕн вĕренес пулать.

ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсен Сталин юлташăн кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе ĕçлекен кружоксене, уйрăм коммунистсене куллен пулăшса, ертсе пырас пулать. Вĕсен халех ку ĕçе лайăхрах йĕркелемелли мероприятисене палăртмалла.

Политикăллă пĕлӳлĕхе ӳстерес ĕçре харпăрхăй тĕллĕн ĕçлени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлекен работниксем, партипе совет тата комсомол активĕ Сталин юлташăн кĕнекине харпăрхăй тĕллĕн те ăнăçлăнах вĕренме пултараççĕ. Анчах парторганизацисен вĕсене куллен пулăшса тăрас пулать, тăтăшах семинарсемпе консультацисем ирттермелле. Семинарсене уйăхра пĕр-икĕ хутран кая мар ирттерес пулать.

Анчах çав вăхăтрах кружоксем организацилес ĕçе пăрахăçлани пачах йăнăш пулать. Паллах, кружоксене ячĕшĕн çеç организацилени нимĕнле усă та памасть. Кружоксене лайăх хатĕрленнĕ пропагандистсем пур çĕрте организацилес пулать. Кружоксенчи занятисене тĕплĕн хатĕрленсе ирттермелле.

Парти кабинечĕсен квалификациллĕ лекцисемпе докладсем ирттерес ĕçе тĕпренех вăйлатас пулать. Сталин юлташăн уйрăм выступленийĕсене ăнлантарса парас енĕпе консультацисем организацилемелле, юлташла калаçусем, ыйтусемпе ответсен вечерĕсем ирттермелле, пĕрпĕрин опытне сармалла.

ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсен тата вĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен заведующийĕсен уйрăм коммунистсемпе тĕл пулса калаçмалла, вĕсем Сталин юлташăн кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен ыйтса пĕлмелле, вĕсене Сталин юлташăн кĕнекине вĕреннĕ чухне тĕл пулакан чăрмавсене сирме пулăшмалла, партипе совет активĕ Сталин юлташăн кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине тăтăшах контрольлесе тăмалла.

Кашни коммунистпа комсомолец, ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлекен кашни работник çакна асра тытса тăтăр: «Совет Союзĕн отечественнăй Аслă вăрçи çинчен» Сталин юлташ çырнă кĕнекене таранăн вĕренесси—унăн хальхи тивĕçлĕхĕ пулать.

С. СДОБНОВ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене—ăшă тумтирсем

ЧКАЛОВСКОЕ. Ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлатрĕç. Ку ĕçе Нариман ячĕпе тăракан, «Кзыл-Йолдыс», «Красный Октябрь» колхозсем аван организацилеçĕ. Нариман ячĕпе тăракан колхозра ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси (председателĕ Миназетдинов юлташ) 12 мăшăр чăлха, 15 мăшăр алшиш пухнă.

А. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Оборона Халăх Комиссариатĕнчен

1. Белгород патĕнче боевой постра Хĕрлĕ Çарăн шанчăклă командирĕ арми генералĕ Иосиф Родионович Апанасенко вилнĕ. СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, Апанасенко юлташăн ячĕ ĕмĕре пытăр тесе, Белгород хулинче унăн ячĕпе памятник лартаççĕ.

2. Орел патĕнче боевой постра Хĕрлĕ Çарăн питех те палăрса тăракан командирĕ, Сталинградри çапăçусенче пулнă генерал-майор Леонтий Николаевич Гуртьев вилнĕ. СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, Гуртьев юлташăн ячĕ ĕмĕре пытăр тесе, Орел хулинче унăн ячĕпе памятник лартаççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 9-мĕшĕнче БРЯНСК енче пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, çаплах малалла тапăнса пынă, 6 километртан пуçласа 12 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 80 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсем хушшинче халăх пурăнакан çак пысăк пунктсем пур: КОНЕВКА, МЕЛОВОЕ (Орелран 40 километр хĕвеланăçнерехре), КРИВЦОВО, БОРЩЕВКА, ДУБРАВА, КИРОВО (Кромыран 22 километр хĕвеланăçнерехре) тата ШАХОВО чугунçул станцийĕ (Орелран 34 километр хĕвеланăçнерехре).

ХАРЬКОВ енче пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 15 километртан пуçласа 25 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вĕсем хушшинче çаксем пур: ТРОСТЯНЕЦ хулипе чугунçул станцийĕ, КУПЬЕВАХА, МАКСИМОВКА, ЧЕРНОГЛАЗОВКА, СЛАТИНО (Харьковран 19 километр çурçĕртерехре), ЦУПОВКА чугунçул станцийĕсем тата халăх пурăнакан пысăк пунктсем: СОЛДАТСКОЕ, КАТАНСКОЕ, МУРАФА, АЛЕКСАНДРОВКА, ХРУЩЕВАЯ НИКИТОВКА (Харьковран 48 километр хĕвеланăçнерехре), КАМЫШЕВАХА, МАЛЫЕ ПРОХОДЫ, МУРОМ, ТЕРНОВАЯ, РУБЕЖНОЕ (Харьковран 40 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, Çурçĕр Донец юханшывĕн хĕвеланăç çыранĕнче). Харьков енче августăн 7-мĕшĕпе 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем—212, тĕрлĕ калибрлă орудисем—139, минометсем—96, пулеметсем—323, автомашинăсем—618, радиостанцисем—30, тĕрлĕ складсем—11, лашасемпе лавсем — 500, боеприпассем, продовольстви, тĕрлĕрен çар пурлăхĕ тиенĕ чугунçул вагонĕсем—315.

Ытти фронтсенче пирĕн войскăсем разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Августăн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем [illegible] фронтсенче нимĕçсен 69 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сы[illegible]шри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, тăшманăн 80 самолетне ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Брянск енче пирĕн войскăсем çаплах малалла тапăнса пынă.

Орелран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малалла куçнă, халăх пурăнакан 22 пункта йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе тăкнă. Пĕр участокра тăшман пехотин пысăк вăйĕсем тата 40 танк контратака тунă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен атакине сирсе янă. Çапăçура тăшманăн 10 танкне персе çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

Орелран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем çаплах малалла куçса пынă, Шахово чугунçул станцине (Орелран 34 километр хĕвеланăçнерехре) тата халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ. Çак участокри çапăçусенче пирĕн войскăсем тăшмана çынсем енĕпе те, техника тĕлĕшпе те пысăк çухатусем кÿреççĕ. Ана çак фактсем лайăх кăтартса пареççĕ. Шахово чугунçул станцийĕ районĕнче халăх пурăнакан пĕр пунктра пирĕн чаçсем совет артиллерийĕ нимĕçсен юлашки çапăçусенче персе çĕмĕрнĕ темиçе вунă танкне тупнă. Çак участокра тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем çапла каласа кăтартнă: нимĕçсен 253-мĕш пехотнăй дивизийĕ юлашки 3 кун хушшинче пулса иртнĕ çапăçусенче хăйĕн личнăй составĕн çуррине çухатнă.

Кромыран хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем халăх пурăнакан 36 пункта йышăнса илнĕ, нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне, 8 полевой оруди, хăй тĕллĕн çÿрекен 2 оруди, 30 пулемет, 13 миномет пĕтерсе тăкнă. Тăшманран 14 оруди, 36 пулемет, 4 радиостанци тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Харьков енче пирĕн войскăсем çаплах ăнăçлăн малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, çапăçса малалла куçса пыраç, Тростянец хулипе чугунçул станцине тытса илнĕ. Çав хула районĕнче совет боецĕсем нимĕçсен концентрациллĕ лагерне тупнă та унта асапланса пурăнакан совет граждансене ирĕке кăларнă. Нимĕçсем пирĕн войскăсен наступленине чарас шутпа пĕр участока пехотăпа танксен пысăк вăйĕсене куçарнă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн çак çапăçăва тытăннă пехотипе танкĕсен резервĕсемпе çапăçма тытăннă. Вара кун каçиччен нимĕçсем 26 танкне, 34 орудине персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă тата 1.500 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Тăшманăн 200 салтакне ытла тыткăна илнĕ. Иллаксен 2 пысăк склада тата снарядсем складне тытса илнĕ. Гвардеец-танкистсем, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ, хăй тĕллĕн çÿрекен 7 оруди тата тĕрлĕ калибрлă 36 оруди пĕтерсе тăкнă. Пирĕн чаçсем, ытла та хăвăрт пырса çапса, темиçе чугунçул станцине йышăнса илнĕ, трофейсем нумай тытса илнĕ.

Изюмран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пĕр соединенийĕн боецĕсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 200 виллин ытла выртса юлнă.

Пирĕн авиаци тăшманăн чугунçул çинчи эшелонĕсене тата пĕр тĕле нумайăн пуçтарăнса тăнă войскисене тата автоколоннисене çаплах пыра-пыра çапнă. Барвенково, Красноград, Гусаровка, Лозовая станцийĕсенче бомбăсем тÿррĕмĕнех пырса тивнĕ пе чугунçул çинчи 7 состава çĕмĕрсе тăкнă тата горючи складне вут тивертнĕ.

вертсе янă. Тăшманăн 200 автомашинине çити тата 50 автоцистернине пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн штурмовиксем тăшманăн колоннисене пырса тапăннă чухне нимĕçсем, зенитнăй артиллерирен персе, штурмовиксен группин командирĕн Столяров майорăн самолетне çĕмĕрнĕ. Вара майорăн ирĕксĕрех тăшман йышăнса тăракан территори çине анса лармалла пулнă. Масленников кĕçĕн лейтенант хăйĕн машинине командирĕн çĕмĕрĕлнĕ самолечĕпе юнашар антарса лартнă. Вăл хăйĕн самолечĕ çинчи вырăна Столяров майора панă. Вара хăй çĕмĕрĕлнĕ самолет çинчи стрелокпа Терло сержантпа пĕрле юсавлă самолетăн çуначĕсем çине хăпарса вырнаçса ларнă. Тĕлĕнсе кайнă нимĕçсен куçĕ умĕнчех совет летчикĕсем сывлăша вĕçсе хăпарнă та хăйсен аэродромĕ çине лайăхах вĕçсе таврăннă.

* * *

Пирĕн летчиксем Финн заливĕнче тăшманăн хуралта çÿрекен икĕ карапне путарнă.

* * *

Вилейка облаçĕнчи районсенче пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ июль уйăхĕн юлашки кунĕсенче нимĕçсен 2 гарнизонне аркатса тăкнă. Халăх пурăнакан пунктсен урамĕсенче пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче партизансем 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕç жандармерин управленине тата темиçе полици участокне аркатса тăкнă. 55 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Подрывник-партизансем шоссе çулĕ çинчи 14 кĕпере сирпĕнтерсе янă. Çавăн чухне вĕсем нимĕçсен 40 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Вилейкăри партизансен тепĕр отрячĕ августăн 3-мĕшĕнче нимĕçсен горючи турттарса пыракан эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 25 цистерна çунса кайнă.

Совет пичетĕнче нимĕçсен 9-мĕш танковăй дивизийĕн 11-мĕш мотополкри 7-мĕш ротăн командирĕ обер-лейтенант Ганс Франкенфельд июлĕн 9-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар енне куçни пирки çырнăччĕ. Çак кунсенче Хĕрлĕ Çар çине çав полкран пĕр ушкăн салтак тата унтер-офицерсем куçнă, вĕсем 8-мĕш ротăран. Çавсенчен пĕри çапла каласа кăтартнă: «Пире официальнăй йĕркепе, Франкенфельд пĕр хыпарсăр çухалнă, тесе пĕлтерчĕç. Анчах та пурте вăл вырăссем енне куçнине пĕлсе тăнă. Çак факт гитлеровецсене питĕ пăтраштарса янă. Франкенфельда дивизире нумайăшĕ паттăр офицер тата чи лайăх командирсенчен пĕри тесе шутланă. Салтаксемпе унтер-офицерсем хăйсем хушшинче çапла калаçма пуçларĕç: Франкенфельд обер-лейтенант вăл мĕн тунине лайăх пĕлет. Вăл хăйĕн хĕрес илме пăрахса панине пысăк хак паман. Франкенфельд пирĕн пулса тупăннă кайрĕ пулать вара. Франкенфельд вырăссем енне куçрĕ пулсан, Германи çĕнтересси текех шанмалли çук, тесе, терĕç. Эпĕ те Франкенфельд çапла тунине тĕрĕс тесе шутлатăп. Эпĕ çакна анлантарса илтĕм: тăшман ...» Юлашки вăхăтра тăшман салтакĕсем, çăмăллăнах пирĕн енне куçаççĕ.

Тата лайăхрах ĕçлеме чĕнекен приказ

ÇĔРПУ, августăн 10-мĕшĕ. Ĕнер, кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче, «Богатырь» колхоза çĕнĕ хаçатсем çитрĕç. «Чăваш Коммуни» хаçатăн августăн 6-мĕшĕнче тухнă номерĕнче Верховный Главнокомандующий Сталин юлташăн приказĕ пичетленсе тухнă. Аслă çулпуçăмăр унта Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларнă войскăсене саламлать.

Тепĕр 10—15 минутăран 1-мĕш бригада сложнăй молотилкăпа авăн çапма пуçăнмалла. Пурте хатĕр, кĕçех трактор кĕрлесе каймалла. Çав вăхăтпа усă курса колхоз агрономĕ В. Клементьева юлташ кĕске вăхăтлă митинг уçать. Комсомолка Д. Петрова Сталин юлташăн приказне васкамасăр, пурне те илтĕнмелле вулама тытăнать. Колхозниксемпе колхозницăсем приказăн пĕр сăмахне те сиктермесĕр итлесе тăраççĕ.

Приказа вуласа пĕтерсенех хамăрăн геройла войскăсене пĕтĕм чĕререн тав тунă сăмахсем илтĕнчĕç, колхозниксем хăйсен шухăш-кăмăлĕсене пĕлтересшĕн пулчĕç. Чи малтан К. Емельянова колхозница сăмах илчĕ.

— Юратнă аттемĕр Сталинăн приказĕ савăнтарчĕ. Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕшĕн савăнса, эпир колхоз уйхирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пулатпăр. Вăрçă вăхăтĕнче ăнса пулнă тырра пĕр тăккаламасăр пухса кĕртессишĕн, государствăна тырпул, пахча-çимĕç тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем вăхăтра парса тătассишĕн кĕрешетпĕр. Пирĕн хальхи ылханлă тăшмана Хĕвеланăçнелелле хĕссе пыракан Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйран пулăшса тăрассишĕн тата лайăхрах ĕçлемелле,—терĕ вăл колхозниксемпе колхозницăсен пĕтĕмĕшлĕ шухăш-кăмăлĕсене пĕлтерсе.

Юлашкинчен колхоз председателĕ К. Трофимов юлташ сăмах илчĕ. Вăл колхозниксемпе колхозницăсене уйхирте татах та тухăçлăрах ĕçлеме чĕнчĕ.

Митинг вĕçленчĕ. Колхозниксем кашни хăйĕн вырăнĕнче. Тракторист трактора кĕрлеттерсе ячĕ, молотилка ĕçе пуçăнчĕ.

Çавăн пекех И. Евдокимов коммунист ертсе пыракан иккĕмĕш бригадăра та агитаторсемпе комсомолецсем колхозниксене Сталин юлташăн кăçалхи августăн 5-мĕшĕнчи приказне тĕплĕн ăнлантарса пачĕç. Колхозра пысăк çĕкленÿ. Ĕç хĕрÿллĕн пулса пырать.

И. МАЛГАЙ.

Ыраш вырса пĕтертĕмĕр

ШАХАСАН. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, эпир, «Ямурза» колхоз членĕсем, 1943 çулхи уборка ĕçĕсене кĕске срокра ăнăçлăн туса ирттерме, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татма конкретнăй обязательствăсем илтĕмĕр. Фронтпа тăван çĕршыва ытлă-çитлĕ тырпул, пахча-çимĕç, промышленность валли чĕр тавар туса парас ĕçе хамăрăн чи малтанхи задача тесе йышăнтăмăр, çак задачăна чыслăн пурнăçласа, колхоз производствинче кашни ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пултăмăр.

Пирĕн сăмах ĕçпе сыхăнса тăрать. Çанталăк йĕпе тăчĕ пулсан та, кĕрхи тырăсене 7 ĕç кунĕнче ăнăçлăн пухса кĕртрĕмĕр. Кĕрхи тырра уйран турттарса капансене хывса лартма тăрăшрăмăр. Ку тĕлĕшпе эпир уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă курса ĕçлетпĕр.

Пирĕн кашни колхозник Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура хамăр колхозăн чысне çĕклеме тăрăшать. Уборка ĕçĕсенче активлăн ĕçлет. Ыраш вырса пуçтарнă çĕрте, акă, ытти ĕçсенче нимĕнпе те уйрăмах палăрса тăман колхозницăсемех иккшер, виççшер норма туса ĕçлерĕç. Т. Тимофеева, Е. Никифорова, М. Иванова юлташсем кулленех 0,15 гектартан пуçласа 0,21 гектара çити тырă вырса пычĕç. Ф. Осипова, Х. Никифорова, М. Петрова колхозницăсем тырă вырас ĕçре кулленех икшер нормăран ирттерсе ĕçлерĕç. Ку колхозницăсем пирĕн колхозăн чаплă çыннисем—вăрçă вăхăтĕнчи двухсотникĕсемпе трехсотникĕсем.

Çамрăк ачасемпе хĕрачасем те тырпулсене пухса кĕртес ĕçре хăйсенчен аслисенчен юлмаççĕ. Вĕсем те уборка ĕçĕсене активлăн хутшăннă. Иван Степанов 14 çулхи подросток çеç-ха, анчах вăл кулленех 65—80-шар тĕм тырă вырать.

Халĕ эпир ыраш вырса пухнă ĕнтĕ, хуратул тата ытти çурхи тырăсене выратпăр. Государствăна 1943 çулхи обязательство тăрăх 42 центнер ыраш, 20 центнер сĕлĕ патăмăр. Уйрăм культурăсем тăрăх обязательствăна çĕр процентчĕпех парса татнă.

И. НЕСТЕРОВ,
«Ямурза» колхоз бригадирĕ.

Паха вăрлăх акмалла

СĔНТĔР, августăн 10-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Районри малта пыракан колхозсем кĕракине августăн 9-мĕшĕнчех тухрĕç. Кашмашри «Свобода» колхоз (председателĕ Петровский юлташ) малтанхи кун 14 гектар ыраш акса хăварчĕ. Паян колхозăн 4 бригади те акать.

Вăрлăха колхоз çителĕклĕ хатĕрленĕ, вăрлăхăн шăтас пахалăхне тата тасалăхне те тĕрĕсленĕ. Паха вăрлăх акаççĕ.

Колхозăн 4 сеялка. Хальхи вăхăтра вĕсем пурте ĕçре. Тырă акакансенчен П. Кириллова, А. Замятин юлташсем тухăçлăн ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех Орининори «Красное Сормово», Юнга ялсоветĕнчи Войков ячĕпе тăракан, Сĕнтĕр ялсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан, Ильинка ялсоветĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем кĕрхи тырăсене акма ĕнер тытăнчĕç. Ку колхозсенче те паха кондициллĕ вăрлăхсем акаççĕ.

Çав вăхăтрах районри хăшпĕр колхозсем кĕракине тухма хатĕрленсе çитмен. Ярославски ялсоветĕнчи «Ударник» колхозăн 210 гектар акса хăвармалла. Анчах та вика акнă 46 гектар çĕре халĕ те çĕртме туман. Колхозăн иртнĕ çултан куçакан вăрлăх фончĕ çук, вăрлăха çĕнĕ тырăран хатĕрлемелле. Çапла пулсан та колхоз председателĕ Арчиков юлташ колхоз молотилкипе авăн çапас вырăнне МТС молотилки килессе кĕтсе ларать.

Ильинка ялсоветĕнчи «Осоавиахим» колхоз çĕртме пуссин 25 процентне çеç икĕ хут суха тунă. Вăрлăх хатĕрлемен, ăна тĕрĕслемен. Сеялкăсем те ĕçе юрăхсăр лараççĕ. Колхоз председателĕ Матвеев ĕçре тимлĕх кăтартмасть.

Районри 101 колхозран 40 колхоз çеç акмалли вăрлăха районри лабораторире тĕрĕслеттернĕ. Тĕрĕслÿ результачĕсем нумай колхозсен вăрлăх япăх пулнине кăтартаççĕ. Сăмахран, Кăпас ялсоветĕнчи «КИМ» колхозăн вăрлăхлăх ыраш шăтас пахалăхĕ 27 процент çеç. Мăн Хураçка ялсоветĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхозăн кĕрхи туллăн шăтас пахалăхĕ 34 процент çеç.

Иртнĕ çулхи вăрлăхăн пахалăхĕ начар пулни ĕнтĕ колхоз руководителĕсем умне вăрлăх хатĕрлес ыйтăва вирлĕн кăларса тăратать. Вăхăта сая ямасăр, кĕраки валли вăрлăх хатĕрлемелле. Пĕтĕм çĕр лаптăкĕшĕпех кăçал паха вăрлăх çеç акмалла.

Т. ИВАНОВ.

Сеялкăсемпе акаççĕ

КАНАШ, августăн 10-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Паян районри 39 колхоз кĕрхи тырăсем акма тухрĕç. «Красное пламя», Молотов ячĕпе тăракан, «Акатуй», Доронин ячĕпе тăракан колхозсенче кĕрхи тырăсене пĕтĕмпех машинăсемпе акса хăвараççĕ.

Хĕвел тухман-ха. Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем паян ирех, сеялкăсене кÿлсе, кĕрхи тырăсем акма кайрĕç. Ирхи апатчен П. Сергеевпа М. Захаров пĕрер гектар тырă акрĕç.

Колхозниксемпе пĕрлех тырă акма агитаторсем те тухрĕç. Партин пуçламĕш организацин секретарĕ М. Зайцевăпа коммунистка А. Игнатьева юлташсем ирхи апат вăхăтĕнче колхозниксене Сталин юлташ Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларнă ятпа войскăсене панă приказа вуласа кăтартрĕç. Тырă акма тухнă колхозниксем Сталин юлташăн приказне стахановла ĕçпе ответлеме пулчĕç. Колхозăн 5 сеялка. Вĕсемпе куллен 16 сехетрен кая мар тырă акма, тырă акас нормăна кулленех икĕ хут ирттерсе тултарма сăмах пачĕç.

Каç пулса çитсен çеç колхозниксем ĕçе пăрахса яла кĕчĕç. Паян, малтанхи кун, тырă акакансем П. Сергеев, Е. Лукина, И. Григорьева, М. Захаров сеялкăпа кунне 5-шер гектар акас вырăнне 7-шер гектар тырă акрĕç. Çапла, пĕр кун хушшинче Доронин колхозра 5 сеялкăпа 34 гектар тырă акнă. Акмалли пĕтĕм вăрлăха протравливани тунă, вăл паха кондициллĕ. Кăçал кĕрхи тырăсене пурĕ 250 гектар акмалла. Çак ответлă ĕçе колхоз 7 талăк хушшинче ăнăçлăн пурнăçлама шутлать.

В. ВЕСЕЛОВ.

127 гектар тырă акнă

ВАРМАР, августăн 10-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Паян районри 55 колхоз пурте тырă акма организованно тухрĕç. Малтанхи кун районри колхозсем пурĕ 127 гектар тырă акса хăварчĕç.

Пирĕн авиаци Унеча чугунçул узелне, Почеп, Люботин, Мерефа, Основа станцийĕсене тапăнни

Августăн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци тăшманăн Унеча чугунçул узелĕнчи тата Почеп, Люботин (Харьковран хĕвеланăçнерехре), Основа (Харьковран кăнтăртарахра), Мерефа станцийĕсенчи çар эшелонĕсем тата çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тÿрремĕнех пырса тивнипе боеприпассен темиçе склачĕ тата темиçе чугунçул составĕ сирпĕнсе кайнă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем нумай тухнă.

Пирĕн 2 самолет хăйсен аэродромĕсене таврăнман.

Хĕрлĕ Хĕрес—фронт валли

МУСКАВ. Çак кунсенче 25 çул тултаракан Хĕрлĕ Хĕрес обществи вăрçă пуçланнăранпа медицинăра ĕçлекен вăтам тата кĕçĕн работниксене 516 пин работник хатĕрленĕ. Вĕсем халĕ хăшĕ тылри, хăшĕ фронтри сыватмалли учрежденисенче, теприсем тата сывлăшран тапănассинчен хÿтĕлекен вырăнти оборона системинче ĕçлеççĕ. Правительство Хĕрлĕ Хĕресĕн хăйсене палăртнă медицина сестрисене, сандружинницисемпе санитарĕсене орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Награда илнисем хушшинче —Ленинград хĕрарăмĕсем 250 çын, Мускав хĕрарăмĕсем 90 çын.

Пĕтĕм совет çĕршывĕпе мухтавлă совет боецĕсем валли харпăрхăй юнне парасси анлăн сарăлса кайрĕ. Пĕр Мускав хулинче кăна аманнă боецсемпе командирсен пурнăçне çăлса хăварма хăйсен юнне темиçе вунă пин çын парса тăраççĕ. Юлашки вăхăтра ачасене пулăшасси вăйланса кайрĕ. Ку ĕçе пуринчен ытла нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенче вăйлатса янă. Çавăн пекех тата Хĕрлĕ Хĕрес организацийĕсем тăлăха юлнă ачасене уйрăм граждансем ывăллăха илсе пăхса ÿстерес ĕçе йĕркелесе тăма та пулăшса тăраççĕ, ача учрежденийĕсем валли укçа-тенкĕ тата тĕрлĕрен кирлĕ япаласем пуçтараççĕ. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Гитлерла варварсем Днепропетровскра мĕн хăтланаççĕ

СТОКГОЛЬМ, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейче цейтунг ин Норвегиен» ятлă гитлерла хаçат нимĕçсем оккупациленĕ Днепропетровскри лару-тăру çинчен пĕр статья пичетлесе кăларнă. Çак статья нимĕç оккупанчĕсем Днепропетровск хулине мĕн туса хунине кăштах çутатса парать. Хаçат çапла çырать: хулара питĕ нумай япалана ишнĕ. Вокзал çурчĕ çунса кайнă,— тет хаçат,— опера театрĕн çурчĕ ишĕлнĕ, кăмрăкланса кайнă, çавăнтан инçех те мар ишсе антарнă матазинсен кирпĕчĕсем выртаççĕ.

Гитлеровецсем ванмасăр тăрса юлнă хваттерсенчен унта пурăнакансене хăваласа кăлараççĕ. Çав хваттерсене пурăнма нимĕçсене кĕртеççĕ. Хаçат çавна йышăннă май çапла çырать: «Халăх çине пырса ÿкнĕ йывăрлăх пĕрре те çăмăл мар. Пурăнмалли çуртсем нумайĕшĕ вăрçăпа пĕтсе ларнă, нумайĕшне вĕсенче пурăнакан халăхăн нимĕç администрацине парăнма памалла пулнă, ыттисене нимĕç салтакĕсем валли пушатмалла пулнă».

Малалла хаçат çапла çырать: хулара продовольстви çук, нимрен те ытла кирлĕ кулленхи япаласем питĕ хаклă тăраççĕ, «питĕ сайра тĕл пулакан япаласемпе танах шутланаççĕ».

Днепропетровскра халăх оккупантсене питĕ хаяр çилĕпе курайманасть. «Çакна пытармалли çук,— тесе çырать хаçат,—вырăнти халăхпа нимĕçсем хушшинче хирĕçÿсем нумай. Ку тĕлĕшпе пĕр тĕслĕх кăтартса парсан та çитет: Германие ĕçлеме ярассине хăйсен тăван çĕршывне юратакан хулари халăх хушшинче хапăл туни пĕрре те çук», тет хаçат.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ЧЕХОСЛОВАКИРЕ 750.000 ÇЫННА АСАП КĂТАРТНĂ

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ доктор Руберт Рипка Лондонра сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çакна пĕлтернĕ: Чехословакие 1939 çулхи март уйăхĕнче оккупациленĕренпе 1943 çулхи майăн пĕрремĕш çуруйăхĕ пĕтнĕ тĕле нимĕçсем чехословаксен 50.000 арçынĕпе хĕрарăмне асаплантарса вĕлернĕ. Çав вăхăт хушшинчех концентрациллĕ лагерьсене 200.000 çынна яхăн янă тата каторгăллă ĕçе 500.000 çынна ытла янă. Ку шута еврейсем кĕмеççĕ. Вĕсене гитлеровецсем Чехословакире темиçе вунă пин таран вĕлернĕ, тĕрмене хупса лартнă е таçта хăваласа янă.

Çак кăтартнă цифрăсем вĕсем—Чехословакири халăх оккупантсемпе хаяррăн та çирĕппĕн кĕрешнине кăтартаççĕ.

КĔСКЕН

▲ Югославри партизанĕсен отрячĕ Аранжеловец хулин хĕррине çĕрле пырса тапăннă. Нимĕç оккупанчĕсен сăмси умĕнчех партизансем 8 сутăн чăка, оккупантсене активлăн пулăшса тăнăскерсене, тытса илсе кайнă. Партизансене хăвалама пысăк отряд янă пулнă. Çапăçу 8 сехет хушши пынă. Оккупантсене туйтармаллах çухатусем кÿрсе, партизансем сăртсем хушшинелле кайса çухалнă.

▲ Бразили влаçĕсем Германи тата Япони подданнăйĕсене пурне те, çавăн пекех тата Итали подданнăйĕсене те нумайĕшне, Сан-Пауло штачĕн çыранри районĕсенчен шалти облаçсене куçарса янă. (ТАСС).

Англи бомбардировщикĕсем Мангеймпа Людвигсхафен хулисене тапăнни

ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем Германин Мангеймпа Людвигсхафен хулисене хаяррăн тапăннă. Рейн шывĕн икĕ енчи çыранĕсенче те вăйлă пушарсем тухнă.

Ытти соединенисем Рурти тĕрлĕ объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Истребительнăй авиацин самолечĕсем тăшманăн Францири тата Голландири аэродромĕсемпе чугунçулсене атакăланă.

БЕРЛИНРИ ХАЛĂХ ХĂРАСА ÿКНĔ

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Стокгольма Берлинран çитнĕ пĕр çул çÿрекен çын çапла каласа кăтартнă: августăн 2-мĕшĕнче каçхине Берлинри халăх ниçта кайса кĕме пĕлмиччен хăраса ÿкнĕ. Ку вăл акă мĕншĕн апла пулнă. Англи самолечĕсем Берлин çине листовкăсем пăрахнă. Çав листовкăсенче Германи столицин халăхне: сире те Гамбург хулин кунçулĕ кĕтсе тăрать, тесе систерсе каланă. Çул çÿрекен çын каланă тăрăх, çав хыпар хулара çиçĕм пек хăвăрт сарăлнă.

ВЕНГРИПЕ РУМЫНИРЕ ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇЛЕ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

ЛОНДОН, августăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Будапештпа Бухарестран çакăн пек хыпарсем илнĕ: Венгрипе Румынире Германие хирĕçле демонстрацисем пулса иртнĕ. Демонстрантсем вăрçа пĕтерме ыйтнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 10-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун саслă илемлĕ

НЕУЛОВИМЫЙ ЯН

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ:
12, 14, 16, 18, 20 тата 22 сехетре.

Часах

ЛЕРМОНТОВ

ятлă фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Чăваш АССР Наркомлесне яланхи ĕçе тата предприятисенче ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: главнăй тата старши бухгалтерсем, инструктор-ревизорсем, счетоводсем, вăрман хатĕрлес, юхтарас тата мехтранспорт тĕлĕшне аслă е вăтам шкултан вĕренсе тухнă специалистсем, плановиксем, юрисконсульт, тукăн авакан квалификациллĕ рабочисем, клепка туса хатĕрлекенсем, токарьсем, шоферсем, трактористсем тата ытти квалификациллĕ рабочисем те.

Ĕçе кĕрекенсене апат-çимĕç, хваттер тата вутă параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Урицкий урамĕ, 36-мĕш номерлĕ çурт, Наркомлес, кадрсен отделĕ.

Юн илекен станцине кассир тата санитаркăсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Канашская ул., Трахоматозный институт.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1093 Типография №1 Управления полиграф, промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.